Тăвай районĕн хаçачĕ

# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ

1935 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă

2024 çул

Çурла (Август), 2

ЭРНЕКУН

29/10719/№

Хакĕ ирĕклĕ

ВЫРМА–2024

## Комбайнсем уйра

**Тăвай округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов хуçалăхсенче вырма епле пынине тимлĕхрех тытать. Хальхи вăхăтра округра ырашпа кĕрхи тулă, сĕлĕ, вика пухса кĕртеççĕ.**

Валентин Грачев хресчен-фермер хуçалăхĕн тата «Акконд-агро фирма» АОн уйĕсенче пулса Олег Анатольевич ертӳçĕсемпе, механизаторсемпе тĕл пулса калаçнă. Çĕр ĕçлекенсен ĕçлес кăмăлĕ пысăк, анчах çумăрсем чăрмантаркалаççĕ.

В.Грачев хуçалăхĕн кăçал 1100 гектар çинчи тĕш тыррă культурисене пухса илмелле. Ыраша тăвата комбайнпа çапса тĕшĕлеççĕ. Тухăç начар мар, мĕншĕн тесен акара пур агротехника мероприятийĕсене те вăхăтра тата пахалăхлă пурнăçланă.

Аккондçăсен 1150 гектар çинчи тĕш тырă культурисене пуçтарса кĕртмелли, хальхи вăхăтра çак ĕçе икĕ тĕш тырă комбайнне явăçтарни çинчен каласа панă предприяти директорĕ Николай Фомин, вырмана тĕплĕн хатĕрленнине, йĕтеме кĕрхи ыраш кĕнине пĕлтернĕ.

## Фермăра та, уйра та пулнă

**Хĕрӳ тапхăр халĕ ял хуçалăхĕнче тăрăшакансемшĕн – вырмапа ытти кĕрхи ĕçсене вăхăтра туса ирттересси çеç мар, выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарма хатĕрленесси те пысăк яваплăх ыйтать.**



Выльăхсен упранаслăхне тивĕçтересси, продуктивлăхне ӳстерессi тата производство тупăшлăхне, рентабельлĕхне хăпартасси паянхи ĕçсенчен нумай килет. Вĕсене пурнăçласси епле пулса пынипе кăсăкланнă та округ администрацийĕн ял хуçалăхĕпе экологи пайĕн начальникĕпе Николай Красновпа Надежда Никифорова тĕп специалист-эксперт, Тенеяльне çитнĕ. «Новый путь» ЯХПКра паянхи кун 80 пуç măйракаллă шултра выльăх, вăл шутра 53 сăвакан ĕне усраççĕ. Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта çак выльăх-чĕрлĕхрен 111,5 тонна сĕт тата 4,9 тонна аш туса илнĕ. Хуçалăхра ĕçлекенсем продукци хисепне ӳстерсе пырас тĕллевлĕ. Çак ĕмĕтпе хĕле хатĕрленсе выльăх-чĕрлĕх витинчи тĕп юсав ĕçĕсене çу кунĕсенчех туса ирттерме тимленĕ: тислĕк кăлармалли механизмсене йĕркелесе янă, урайсене тӳрлетнĕ, чӳречесене улăштарнă тата ытти те. Ферма территорийĕнчи тислĕке кăларнă. Тĕрлĕ выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлесе хума кирли çинчен те пынă сăмах.

Андрей Моряков хресчен-фермер хуçалăхĕн уйĕсенче те пулнă **(сăн ӳкерчĕкре)**. Фермер лаша ĕрчетет, тĕш тырă тата выльăх апачлĕх культурăсем туса илет. Фермер хуçалăхĕ 310 тонна утă, 300 тонна сенаж хатĕрленĕ ку вăхăт тĕлне. Комбайнсем халĕ уйра, сĕлĕ çапаççĕ. Тухăç лайăх. Лашасемшĕн – деликатес. Вĕсене çитерес тĕллевпех сĕлĕ акса тума тытăннă фермер, лаптăкне ӳстернĕ.

**Иван ИВАНОВ**

## Йыш ӳссех пырать

**Республикăра вак тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсен йышĕ хушăнсах пырать. Хăйсем тĕллĕн ĕçлекенсемпе пĕрле шутласан вĕсен шучĕ 110 пине çитнĕ – çулталăк каяллахинчен 25 процент чухлĕ пысăкрах. Ку сферăра ĕçлекенсен хисепĕ вара 222 пин çурăран иртнĕ, умĕнхи çулхинчен 16 процент нумайрах.**

Харпăр хăй тĕллĕн ĕçлекенсем налук тӳлесси те иртнĕ çулхинчен чылай хушăннă. Çакăнпа пĕрлех пуçарулла çынсен ĕçĕ те курăмлă.

Пирĕн Тăвай муниципалитет округĕн территорийĕнче вак предпринимательлĕхĕн 324 субъекчĕ ĕçлет, вĕсенче вăй хуракансен шучĕ 1558 çын шутланать.

## Чи маттурисене – грант

**Тĕп капитала инвестици хывассипе тата территорисен экономикине вăйлатассипе палăрнă муниципалитетсене Чăваш Республикин Пуçлăхĕн гранчĕпе хавхалантарнă.**

Муниципалитетсен округĕсем хушшинче Шупашкар округĕ пĕрремĕш вырăн йышăннă, 12 миллион тенкĕлĕх гранта тивĕçнĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Çĕрпӳ округĕ, грант виçи – 10,5 миллион тенкĕ. Элĕк тата Красноармейски округĕсене 9 тата 6 миллион тенкĕ панă. Хула округĕсенчен Çĕнĕ Шупашкара 12,5 миллион тенкĕлĕх грант парса хавхалантарнă.

## Инвестицисем, ĕç вырăнĕ хушăнĕ

**РФ экономика аталанăвĕн министерствинче Чăваш Республикин 2030 çулччenхи аталанăвĕн проектне пăхса тухнă. Унта промышленноç аталанăвĕн фондĕнчен инфратытăм тата туризм объекчĕсене çĕнетме, хăмла туса илессине вăйлатма çăмăллăхлă кредитсем уйăрассине палăртнă.**

Хальлĕхе çĕнĕ производствăсем йĕркелемелли, вăйра тăраканнисене çĕнĕ хăват памалли 24 миллиарда яхăн тенкĕлĕх 42 инвестици проектне пулăшу пама ыйтса хатĕрленĕ.

Чăваш Ен хăмла туса илекен тĕп регионсенчен пĕри пулнă май, ку енĕпе тулли цикл йĕркелĕç, отрасльте импорта 46 процент ылмаштарма пăхнă. Палăртнă ĕçсене республикăри вунă хуçалăхра пурнăçа кĕртĕç.

Туризм инфратытăмне аталантармалли тĕллевсене пурнăçланă май республикăна килекен туристсен йышĕ 1 миллион çынна çитĕ.

Социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн программипе сĕннĕ мероприятисене пурнăçлани пысăк тухăçлă 930 яхăн çĕнĕ ĕç вырăнĕ йĕркелеме, бюджет тулашĕнчи инвестицисене явăçтарма май парассине палăртнă Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев.

ЫР КĂМĂЛЛĂХ АКЦИЙĔ

## Вĕренӳ çулĕ умĕнхи парне

**Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн Тăвай муниципалитет округĕ Запорожье облаçĕнчи Бердянск районĕнчи Троянскри вăтам шкул валли гуманитари пулăшăвĕ ăсатнă.**

Çакă ыркăмăллăх акцине округри пур вĕренӳ учрежденийĕнче ĕçлекенсем тата вĕренӳ пайĕн коллективĕ хутшăннă. Пĕрремĕш класра вĕренекен пуххисем, рюкзаксем, комплекслă хăрушсăрлăх материалĕсем тата ытти кирлĕ япаласем янă.

2023 çулхи апрельтенпе Чăваш Республики маларах асăннă Бердянск районне шефа илнĕ. Унти Троянск шкулне Тăвай муниципалитет округне çирĕплетсе панă.

**Ирина СЕМЕНОВА**

ПРЕСС-ЦЕНТР

**Августăн 1-мĕшĕ тĕлне округри хуçалăхсем пурĕ пĕрле 300 гектар ытларах пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тĕш тырă культурисем пухса кĕртнĕ, пĕр гектар пуçне вăтам тухăç 24 центнерпа танлашать. Хальлĕхе кĕрхи ырашпа кĕрхи тулă, викăпа сĕлĕ çапса тĕшĕленĕ.**

**Выльăх апачĕсенчен утă 6320 тонна (кирлĕ хисепĕн 74 процентĕ чухлĕ), сенаж 22700 тонна (109 процент) хатĕрлесе хунă. Хăш-пĕр хуçалăхсем нумай çул ӳсекен курăксене иккĕмĕш хут çулса пухаççĕ – кам утăлăх, кам – сенажлăх.**

**Кĕр акине хатĕрленсе çĕр кăпкалатасси малалла пырать.**

АСĂРХАТТАРНИ

## Етĕрне округĕнче – карантин

**Етĕрне округĕнче урмăш (бешенство) чирне тупса палăртнăран карантин йĕркелени çинчен пĕлтернĕ.**

Асăннă хăрушă чирĕн вирусне округри Янăм ялĕнчи пĕр кил хуçалăхра палăртнă. Кунта кушак чирлесе вилнĕ. Çавна май 2024 çулхи июлĕн 22-мĕшĕнчен чикĕлев мерисем йышăннă. Карантин ятарлă хушу кăлариччен вăйра пулать.

Ветеринари ĕçченĕсем асăннă пунктра чире пĕтермелли ĕçсене пурнăçлаççĕ.

**ЧР Патшалăх ветеринари служби**



ÇЫРĂНТАРУ – 2024

**«Ял ĕçченĕ» хаçата 2024 çулхи сентябрь-декабрь уйăхĕсенче илсе тăма çыхăну уйрăмĕсенче çырăнтараççĕ. Тăватă уйăха – 413 тенкĕ те 16 пус.**

**Альтернативлă йĕркепе çырăнмалли хак – 300 тенкĕ.**

ÇĔНĔ ВĔРЕНŸ ÇУЛĔ УМĔН

## Тĕрĕслевсем иртеççĕ

**Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен уйăхран та катăлчĕ.**

**Мĕнле кĕтсе илеççĕ ăна шкулсенче, ача сачĕсемпе хушма вĕрентӳ учрежденийĕсенче?**

Округ администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕн тивĕçне вăхăтлăх пурнăçлакан – вĕрентӳ пайĕн начальникĕ Ирина Семенова ертсе пынипе ятарлă комиссии малтанах Тĕмер, Мучар, Чутей, Тушкил шкулĕсенче пулнă.

Пушар хăрушсăрлăхĕпе, канализаципе, шывпа, электроэнергипе тивĕçтерекен системăсене, хутмалли сезона хатĕрлесе çитернĕ-и? Тĕрлĕ ӳсĕмри вĕренекенсене тивĕçлĕ сĕтел-пуканпа тивĕçтернĕ-и? Терроризм хăрушлăхĕнчен сыхланас тата вĕрентӳ ыйтăвĕсемпе çыхăннă ытти ĕç-хĕлпе кăсăкланнă. Тĕпрен илсен, ачасене кĕтсе илме хатĕррине палăртнă. Учреждениесенче юсав ĕçĕсем туса иртнĕ, территори таврашне хăтлăх кӳнĕ. Çĕнĕ Пуянкасси шкулĕнче ăшăтмалли тытăмпа апат-çимĕç блокĕн пӳлĕмне юсав тăвассине августăн 15-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле.

Вĕренӳ çулĕ умĕн вĕрентĕвĕн 11 учрежденийĕнче пуçаруллă бюджет программипе 22 млн тенкĕ ытлалăх 16 проекта ĕçе кĕртнĕ.

**Хамăр инф**

## Юлашки эрнере – 4 туй

**Çĕнĕ çемье çурални – кирек камшăн та уяв. Утă уйăхĕн юлашки канмалли кунĕсенче Тăвай округĕнчи ЗАГС пайĕнче харăсах тăватă мăшăр хăйсен пĕрлĕхне çирĕплетнĕ.**

Телей, ырă кун-çул суннипе пĕрлех вĕсене çемье телейĕн вăрттăнлăхне уçса панă ромашка çеçкисенчен хатĕрленĕ чечексем парнеленĕ. ЗАГС пайĕ пуçарнипе ырă йăлана тăсса юбилей туйĕсене иртterекен сумлă мăшăрсем çамрăксене çемье çирĕплĕхĕпе палласштарассине йĕркеленĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа Тăвай енре 14 çемье чăмăртаннă, иртнĕ çулхинчен 5 туй ытларах пулнă.

**Валентина НОВИКОВА,**
**ЗАГС пайĕн заведующийĕ**

ЭКОЛОГИЯ

## Этем – çут çанталăк пайĕ

**2024 çул – Чăваш Енре экологи çулталăкĕ. Ку Указа çут çанталăк ресурсĕсемпе тухăçлă усă курас тата экологи культурине аталантарас тĕллевпе йышăннă.**



Этем – çут çанталăк пайĕ. Мĕн пĕчĕкрен ачасене çут çанталăка юратма, унпа перекетлĕ усă курма вĕрентмелле. Çакăншăн çитĕннисем пулас ăрусем умĕнче яваплă. «Пирĕн ĕмĕре çитет»,–текенсем те тĕл пулаççĕ-ха.

Çулталăк хушшинче экологи культури енĕпе пирĕн республикăра тĕрлĕ мероприятисем – экоурoксем, экотурнирсем, фестивальсем, конференцисем, конкурссем, олимпиадăсем, экскурсисем, шкулти лесничествăсен слечĕсем, субботниксем тата ытти те иртеççĕ. Утă уйăхĕн вĕçĕнче кăна Тăвай округ территорийĕнче «Хура çăл» çăлкуçĕсем» ятпа республикăри экологи фестивалĕ йĕркеленĕ.

Çак кунсенче Чутейри библиотекăпа культура çурчĕн ĕçченĕсем «Вата юман патĕнче хăнара» экологи экскурсийĕ иртternĕ.

Ялти вăрманти ватă юман çинчен хатĕрленĕ презентацие пăхса тухнă хыççăн, ачасем çитĕннисемпе пĕрле интереслĕ çулçӳреве тухнă.

Юман йывăçĕ хăйĕн вăрăм ĕмĕрĕпе паллă, вăл темиçе çĕр çула та çитме пултарать. Хăш-пĕр юмансем 1000 çул ытла ӳсеççĕ. Пирĕн ял çумĕнче ӳсекен юмана 300 çул ытла. Пурин те пĕлес килчĕ: чăннипе миçе çулта-ши вăл? Ялти ватăсем те çакна уççăн калаймаççĕ. Тен, специалистсем татса пама пулăшĕç?

Юман патне çитсен ачасем аслисемпе пĕрле çут çанталăк палăкне тĕпченĕ. Чутей сали вĕçĕнчи вăрман хĕрринче, Гагарин урамĕн çурçĕр-хĕвеланăç енче, ӳсекен юманăн çӳллĕшĕ 2008 çулта 29 м (шел, кăçалхи çӳллĕшне виçме май пулман) пулнă. 2023 çулта вулă çаврăнăшĕ – 4 м 62 см, кăçал – 4 м 65 см. Ачасем туратсем кăнтăр енче ытларах пулнине асăрханă. Хуппи питĕ хулăн, апла пулсан вăл питĕ нумай çул ӳсет. Йывăç вăрлăхран – йĕкелтен ĕрчет. Халăх сăнанă тăрăх, йĕкел нумаййи – сивĕ хĕле. Экскурсие килнĕ ачасем кăçал юманăн пĕр йĕкел те çуккине асăрханă. Апла пулсан, кăçал хĕл ăшă пулмалла.

Ачасем юман йывăçĕ питĕ çирĕп пулнине, унран тĕрлĕ сĕтел-пукан, катка-пичке, карапсем тата ыт.те тунине пĕлнĕ. Ученăйсем этемĕн малтанхи апачĕ юман йĕкелĕ пулнине çирĕплетсе панă. Йĕкел çăнăхĕнчен ĕлĕк асатте-асаннесем çăкăр, пашалу пĕçернĕ, çулçă çинчи «юман çăпанĕнчен» шкулта çырма чернил туса хатĕрленĕ. Пӳрт-çурта ăшăтма, мунча хутма юман вутти хĕрӳллĕрех. Медицинăра та юман хуппипе тата йĕкелĕпе анлăн усă кураççĕ.

Йывăç турачĕсемпе çулçăсем мухтавпа паттăрлăх, вăй-халпа çирĕплĕхĕн символĕ пулнă. Юман турачĕсенчен тунă пуç кăшăлĕпе пурнăçа çăлса хăварнăшăн тата çар паттăрлăхĕшĕн наградăланă.

Вăрманти чĕр-чунсем – упасем, хир сыснисем, кайăксем, шăшисем йĕкеле юратса çиеççĕ. Хамăр астăвасса та килти сыснасене йĕкел пухса килсе çитереттĕмĕр. Ачасем юман çине çырса палăртнă числосемпе кăсăкланнă. Çитĕннисем çапла ăнлантарнă: «Патшалăх реестрĕпе 370 №-лĕ, Тăвай енчи вăрмансенчи нумай çул ӳсекен юмансене шута илсен, Чутей ял вĕçĕнчи юман 7 №-лĕ йывăç шутланать (районти лесхоз паспортĕнчен илнĕ). Çак юман малтан Тĕмер вăрман хуçалăхне кĕнĕ, халĕ Канаш вăрман хуçалăхне кĕрекен Сиккасси участокĕнче».

Вата юмансем çут çанталăк палăкĕ пек сыхланаççĕ. Чутей ялĕн вĕçĕнчи юмана вара 2008 çулта карта тытнă хыççăн нумай çул пăхман пулмалла. Ачасем çак йывăç йĕри-тавра та Муркаш районĕнчи Ильинкăри юман пек таврашне тирпей-илем кĕртмеллине, чăн-чăн çулне, çӳллĕшне пĕлес килнине палăртнă.

2024 çул экологи çулталăкĕ пулнă май, Чутей çывăхĕнчи çут çанталăк палăкне те тимлĕхсĕр хăварас марччĕ.

Юман патне экскурсие илсе килни ачасене çут çанталăк илемĕпе хăватне хаклама, çавăн пекех çак йывăçпа çыхăннă вăрттăнлăхсемпе легендăсен тĕнчине курма май панă.

**Зинаида ИВАНОВА**
**тавраპĕлӳçĕ, Чутей ялĕ**

РЕСПУБЛИКĂРА, ОКРУГРА

• Вăл е ку пуçару проектне пурнăçлассипе çыхăннă тăкаксен 70 процентне таран республика бюджечĕ саплаштарĕ, 30 процентĕнчен кая мар пайне – вырăнти бюджет, граждансем обязательнăй йĕркепе хывакан укçа, бизнес тата общество организацийĕсен пулăшăвĕ, пĕлтернĕ ЧР ял хуçалăх министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Инна Волкова. Асăннă программа мероприятийĕсем валли кăçал пурĕ 2 миллиард тенкĕ уйăраççĕ. Конкурс суйлавĕ витĕр пуçару бюджечĕн 1488 проекчĕ тухнă.

Тăвай муниципалитет округĕнче кăçал пĕтĕмĕшле суммипе 116 миллион тенкĕлĕх 115 пуçару проектне пурнăçа кĕртеççĕ.

• Иртнĕ çулхи çав тапхăртипе илсен, республикăра кăçалхи пĕрремĕш çур çулта промышленноç производствин ӳсĕмĕ 125 процентпа танлашнă. Тирпейлекен производствăсен кăтартăвĕ тата пысăкрах – 128 процент. Сĕтел-пукан туса кăларасси 4,7 хут пысăкланнă. Çавăн пекех компьютерсемпе оптика хатĕрĕсен, металл изделисен, металлурги отраслĕн производствин ӳсĕмĕ те аван.

• Кăçалхи январь-июнь уйăхĕсенче аграрисем сĕт суса илессине 3,7, çăмарта туса илессине 7,2 процент хăпартнă, аш калăпăшĕ вара республикăра 8,6 процент чакнă. Пирĕн округри пур категорири хуçалăхсенче 586,4 тонна (ӳсĕм 5,1 процент) аш, 12587,8 тонна (ӳсĕм 6,8 процент) сĕт туса илнĕ.

• Регионта строительство ĕçĕсен калăпăшĕ 17,5 миллиард тенкĕпе танлашнă. 412,5 пин тăваткал метр е пĕлтĕрхи çак тапхăртин 95 проценчĕ чухлĕ пурăнмалли çуртйĕр хута янă, çак шутра пирĕн Тăвай округĕнче 2728 тăваткал метр ĕçе кĕртнĕ, ку вăл умĕнхи çулхинче чылай пысăкрах.

• Тĕмерти культура çуртне 17 миллион тенкĕлĕх тĕпрен юсас ĕçсем малалла пыраççĕ.

• Тăвайри тĕп библиотека муниципаллă модель библиотеки тумашкăн 10 миллион тенкĕлĕх грант хуçи пулса тăнă.

• «Чутеевский» ЯХПКра сĕте ĕçлесе хатĕрлемелли, сыр туса кăлармалли пĕтĕмĕшле 20 миллион тенкĕлĕх цех тăвассине кăçалхи пĕрремĕш çур çулта вĕçленĕ пулсан, округра пĕтĕмпе 460 миллион тенкĕлĕх тата тăватă проекта пурнăçа кĕртесси малалла пырать.

• Вырăс Нăрваш салинчи Евгений Новиков хресчен-фермер хуçалăхĕнчи пулă ĕçлесе тирпейлемелли цеха 2024 çулхи тăваттăмĕш кварталта хута яма палăртаççĕ.

**Иван ГЛАДКОВ хатĕрленĕ**

## Вăрманта пушар ан тухтăр




**Республика прокуратури вăрмансене пушарсенчен сыхланмалли саккунсене мĕнле пурнăçланине тишкернĕ.**

Çулталăкăн пĕрремĕш çурринче регионта вăрмансенче пулнă 10 пушара регистрациленĕ, вут-çулăм алхаснă лаптăк 8 яхăн гектарпа танлашнă. Çанталăк типĕ те шăрăх тăнă май сыхлăх пушшех çирĕп пулмалли куçкĕрет, çапах пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерес тĕлĕшпе саккуна уяман тĕслĕх чылай.

Тĕрĕслев Йĕпреç лесничестви вăрмансенче пушар сарăласран сыхланмалли минерализациленĕ йĕрсем тăвассине туллин пурнăçламанни палăрнă. Çакнашкал тĕслĕхсене Шăмăршă, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле прокуратурисем те тупса палăртнă. Должноçри çынсен явап тытма тивнĕ. Нумай округра вăрман фончĕпе юнашар территорисенче каяшсен санкцилемен вырăнсем пуррине палăртнă. Кашни тĕслĕхпех вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ячĕпе представленисем çырнă та – каяшсен куписене вăраха ямасăр тасатнă.

Вăрмар райпрокуратури ял хуçалăх тĕллевлĕ 29,5 гектар çĕрпе никам та усă курманнине çирĕплетнĕ. Сухаламан-акман çĕрте çум курăк ашкăрать. Пушар тухасси, вăл вăрмана куçасси те часах. Надзор органĕ кăтартнă хыççăн вырăнти администраци çĕре çаврăнăша кĕртес енĕпе мерăсем йышăнать. Кунашкаллине Тăвай прокуратури те тупса палăртнă.

Ялсенче пушар хăрушсăрлăхĕн требованийĕсене уяман тĕслĕх те нумай. Прокуратура кашни тĕслĕхпех представлени çырнă. Вĕсене тишкерсе çитменлĕхсене пĕтерме мерăсем йышăннă, айăплисене дисциплина енĕпе явап тыттарнă.

# Пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса

**Иртнĕ çул Тăвай округĕнче 3 вĕренӳ учрежденийĕнче агролаборатори йĕркеленĕ. Вĕсен тĕллевĕ – ачасене мĕн пĕчĕкрен çĕр ĕçĕпе паллаштарасси, тăван тавралăха юратма вĕрентесси.**

**Ял хуçалăхĕнче кадрсем çителĕксĕрри агроклассем, лабораторисем уçас проекта ĕçе кĕртессипе те çыхăннă. Ку проекта хутшăнса «Акконд-агро фирма» общество Тăвайри «Асамат кĕперĕ» ача садне шефа илнĕ.**





Агролаборатори ĕçĕпе темиçе хутчен те паллаштартăмăр хаçатра. Пӳлĕмсенчи чӳрече анинче вырнаçтарнă савăтсене. Мини-оборудованипе аккондçăсем тивĕçтернĕ хыççăн садик çумĕнчи участока вырнаçтарнă. Вĕсенчи калчаран лартнă помидорсем хĕрелме пуçланă ĕнтĕ. Тутлă пăрăçсем те çирĕпленеççĕ. Аслисем пулăшнипе ачасем шăварсах тăраççĕ, çимĕçсене пуçтарма юратаççĕ. Уçă çĕрте йăранăн-йăранăн кишĕр, хĕрлĕ кăшман, сухан, хăяр, укроп, петрушка, салат, кавăн ӳсеççĕ. Юнашарах сиплĕ курăксене вырăн панă. Кашнин ятне табличкăсем çине çырса хунă: мелиса, пĕтнĕк, шалфей, дущица, чапăр курăкĕ... Вунă тĕрлĕ ытла сывлăхшăн усăллă ӳсен-тăрана шăпăрлансем кирек ăçта курсан та палласа илеççĕ халĕ, мĕншĕн усăллине каласа пама пултараççĕ.

«Асамат кĕперĕсен» картишĕнчи чечексен йăранĕсем илемĕпе тыткăнлаççĕ. Кунти асамлăх ачасене тăван çут çанталăк пуянлăхне упрама, çĕр ĕçне лайăххах ăнланма пулăшасси куçкĕрет.

Агролабораторири çĕнĕлĕх ачасене кăсăклантарать. Пӳлĕмре мандарин, апельсин тата ытти çимĕçсене вăрăран та акнă, интересленсех сăнаççĕ мĕнле çитĕннипе.

Çĕр ĕçне çапла пĕчĕкрен вĕренни, усăллă ĕçе хăнăхса ӳсни никамшăн та пăсăк мар. Ашшĕ-амăшне те пулăшаççĕ килти ĕçсенче. «Пĕрлехи ĕç туслăха та çирĕплетет»,– пĕтĕмлетрĕç калаçăва ача сачĕн ĕçченĕсем.

**Раиса ШУМОВА**

РЕСПУБЛИКĂРИ ОКРУГСЕНЧЕ

# Суту-илӳ ĕçченĕсене чысланă

**Шупашкар округĕн администрацийĕ Кӳкеçри культура çуртĕнче савăнăçлă пуху ирттерсе суту-илӳ ĕçченĕсене сума сунă.**

Суту-илӳ округра – чи лайăх аталанакан отрасльсенчен пĕри. Вак суту-илӳ çаврăнăшĕ 2024 çулхи пĕрремĕш çур çулта 2 миллиард та 10 миллион тенкĕпе танлашнă. Ку вăл çулталăк каяллахинчен 5,5 процент пысăкрах.

Округăн потребительсен рынокĕнче вак суту-илĕвĕн 259, обществăлла апатланăвĕн 112, йăлари ыйтусене тивĕçтерекен 46 предприятийĕ ĕçлет, канмалли кунсенче 11 ярмăркка, стационарлă мар объектсем хушăнаççĕ – вĕсенче пурĕ 2 пин ытла çын тăрăшать. Пĕрремĕш çур çулта потребительсене сутакан тавар тата пулăшу ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатма, суту-илӳпе обществăлла апатланăва сарма 36 миллион тенкĕлĕх инвестици хывнă, çĕнĕ 19 ĕç вырăнĕ туса хунă. Продукци туса илекенсене, çав шутра кил хуçалăхсене, сутма кашни ял тăрăхĕнчех ятарлă вырăнсем йĕркеленĕ.

Суту-илӳ ĕçченĕсем хăйсен тĕллевне ăнăçлă пурнăçланăран халăха таварпа тивĕçтересси лайăх пулса пырать. Округра пурăнакансене чылай енĕпе пысăк пулăшу панăшăн суту-илӳпе общество апатланăвĕнче ĕçлекенсен пысăк ушкăнне муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Владимир Михайлов тав тунă, суту-илӳ ĕçченĕн кунĕ ячĕпе саламланă, ăнăçусем суннă.

Владимир Борисович округăн пĕчĕк тата вăтам бизнесĕнче 4200 çын тăрăшнине, вĕсенчен пысăкрах пайĕ ĕçе ăнăçтарса пынине те палăртнă, нумаях пулмасть инвестици вăй-хăватне ӳстерме округа 12 миллион ытла тенкĕлĕх грант панине, округ ĕçлесе тунă тупăш пысăкланса пынине пĕлтернĕ.

# Çĕрулми уйĕн кунĕ

**Иртнĕ эрнекун Комсомольски округĕнче «Çĕрулми уйĕн кунĕ» иртнĕ, ăна «Çĕрулмине – мухтав» агрофирма йĕркеленĕ.**

Ку хуçалăх Чăваш Енре асăннă çимĕçе туса илессипе чи пысăк предприятисенчен пĕри шутланать. Агрофирмăн усă куракан çĕрĕсем 5300 гектар йышăнаççĕ, вĕсенчен 650-шĕ çинче çĕрулми лартса тăваççĕ. Елчĕк тăрăхĕнчи Кӳлпуç, Хăвăлçырма ялĕсен çывăхĕнчи уйсенче «Краса Мещеры», «Метеор», «Пламя», «Самба» сортсене çитĕнтерни пирки каласа панă Дмитрий Трофимов агроном. «Самба» тата «Метеор» –питĕ хăвăрт пулса çитĕнекен сортсем. «Краса Мещеры» питĕ йышлă тухать тата çимĕçĕ тутлă. Пĕр тĕпрен 15–19 çĕрулми йăтăнать. Каçал тăрăхĕнчи Хирти Сĕнтĕр уйĕнче «Догода», «Дана», «Сальса», «Блоссом», «Амигос» çĕнĕ сортсене вырăн панă.

Агрофирма сортсене кашни çул çĕнетет. Продукцие упракан хранилищĕсенче шалти температурăна, нӳрĕк виçине автоматика йĕркелет.

Çĕрулми калчисене пробиркăра та çитĕнтереççĕ.

Агрофирма çĕр пулăхне ӳстермелли тĕрлĕ майпа усă курать. Çĕрулми вырăнне пусă çаврăнăшĕнче улăштарсах тăраççĕ. Кĕрхи тулă туса илнĕ лаптăкра çĕрулми уйрăмах ăнса пулнине, çакна ăна çинче çумкурăк сахалланнипе, ӳсентăран чир-чĕртен лайăххах сыхланнипе çирĕплетеççĕ.

Агрофирмăн çĕрулми вăрлăхне республикăри тата регион тулашĕнчи нумай хуçалăхран пырса туянаççĕ.

**Хаçатсем тăрăх Иван ГЛАДКОВ хатĕрленĕ**

# Шупашкара – 555 çул

**Эпир Чăваш Республикинче пурăнатпăр. Пирĕн юратнă тĕп хуламăр Шупашкар анлă Атăлĕн сылтăм енче, Хусанпа Чулхула хушшинче вырнаçнă. Çулсерен илемленсе пырать.**

**Шупашкар – авалхи хула, 1469 çулта никĕсленнĕ, çавăнпа эпир кăçал ун паллă юбилейне, «висĕ пиллĕке», уявлатпăр.**

Пирĕн республикăра тĕрлĕ халăх çынни пурăнать: чăваш, вырăс, тутар, мордва тата ытти те. Ялсенче те çавнашкалрах халь. Халăхсен туслăхĕ пире савăнтарать, пурăнма вăй-хăват парать.

Тĕрлĕ чĕлхепе ирĕклĕн калаçма пулать тăван çĕршывăмăрта.

Чăваш Республикин патшалăх чĕлхи иккĕ. Хула ачисем те чăвашла калаçма, вулама, çырма вĕренеççĕ. Уроксенче чăваш культурипе, историйĕпе паллашаççĕ. Уйрăмах çулла хула ачисем яла килеççĕ: вĕсем пирĕнпе, ял ачисемпе, чăвашла калаçма тăрăшаççĕ, шӳтлешӳтлех, кула-кулах вĕренеççĕ. Пĕр-пĕрне хисеплени, вĕрентни туслăх кĕперне хывать, çыхăнăва çирĕплетет, ăс-тăна вăйлатать.

Çурла уйăхĕн 15-18-мĕшĕсенче пĕтĕм чăваш çĕршывĕ шурă Шупашкарăмăра çепĕç юрăсемпе мухтаса янăратса тăрĕ.

Тĕслĕхрен, Василий Шихранов сăвви-юрринчен çак йĕркесене илер:

*Çăкасем çурнă чух çеçкине*
*Пит хитре–çке тăван Шупашкар.*
*Пыл тути кĕрекен техĕмне*
*Сапалать-çке хула-çăкасар.*

Шупашкар хайĕн ытамне илемĕпе çеç мар, пыл тутилĕ техĕмĕпе те туртать иккен.

Чаплă чăваш уявне чăвашĕ, вырăсĕ, тутарĕ, ирçи, мăкши тата ытти пуçтарăнĕ. Илемлĕ те уçă сасăллă юрăçсем, тĕрлĕ музыка ăстисем, ташă маçтăрĕсем хăйсен пултарулăхĕпе тĕлĕнтерĕç.

Савнă Шупашкартан аякках вырнаçнă пулин те, час-часах хулана çитетпĕр, çемьепе, тепĕр чух - шкулти йышпа.

Чи малтанах К.В.Иванов ячĕллĕ академи драма театрне çул тытатпăр. Унта куçа шартаракан зал илемĕ, артистсен сассисем, вĕсен янăравлă кĕвви-юрри, тыткаларăшĕхусканăвĕсем куракана самантрах тыткăна илеççĕ.

Спектакль тăршшĕпех алă çупса хавхалантаратпăр сцена ăстисене.

Шупашкар историйĕ çинчен те нумай пĕлес килет. Тĕп хуламăра 1767 çулта Аслă Кĕтерне патша килсе кайнипе, пилĕк кĕмĕл кăвакаллă гербпа тивĕçтернипе, «Пугачев историйĕ» çырас тĕллевпе 1833 çулта Шупашкарти А.С.Пушкин пулнипе пуян. Ун чухне те Шупашкар илемлĕ хула пулнă. 13 чиркӳ, капмар мăнастирсем, юманлăх…

«Патша адмиралтейство пурлăхĕ шутланакан карап тумали юман вăрманне хăй куçĕпе хăй кайса курма кăмăл тунă»,- çапла çырса хăварнă çав вăхăтри мăнастир çыннисем. Каярах Панин граф ячĕпе çырнă çырура патша хăй шухăшне пĕлтерсе хăварнă: «Шупашкар маншăн Чулхуларан та кăмăллăрах».

Хальхи вăхăтра Шупашкар пуянланса пырать. Мĕн чухлĕ паллă вырăн: музейсем, театрсем, аслă шкулсем, культура палăкĕсем, ӳнерçĕсен ĕçĕсем, фонтансем, Анне палăк, завод-фабрикăсем, скверсем, каçхи залив, аттракционсем, паркcем, ырă кăмăллă та ĕçчен çыннисем, унсăрăн тата илемлĕ çӳллĕ çуртсем, пăхсан çĕлĕк ӳкмелле…

Мĕн чухлĕ юрă хывман-ши савнă Шупашкар çинчен паллă композиторсем:

*Несĕлсем савса ят панă,*
*Шупашкарăмăр, сана.*
*Пурнăçра ялан упранă*
*Сан ятна та сан чысна.*
*Шурă, шурă Шупашкарăм*
*Шурă шупăр тăхăнсан*
*Акăш евĕр курăнатăн*

Анлă Атăл хĕрринче,- тесе юрлаççĕ юрăçсем А.Кибеч çырнă, Г.Максимов кĕвĕленĕ «Шурă Шупашкар» юрра.

Уроксенче, класс тулашĕнчи ĕçсенче «Çĕнĕлет ман ватă Шупашкар», «Юрататăп, çĕршывăм, сана», «Ӳсет, капăрланать республикăн тĕп хули», «Шупашкарăм, савнă Шупашкар» темăсемпе ĕçлеме май пурри пире савăнтарать, чун-чĕрене пуянлатать.

**Алина ИВАНОВА,**
**Чутей шкулĕ**

# Коррупципе кĕрешесси уйрăмах пĕлтерĕшлĕ

**Следстви комитечĕн республикăри следстви управленийĕн коллегийĕн анлă ларăвĕнче ведомствăн 2024 çулăн пĕрремĕш çурринчи ĕçне пĕтĕмлетнĕ.**

Управлени ертӳçи Александр Полтинин ларăва ĕçтешĕсене професси уявĕ ячĕпе саламланинчен пуçланă. Хăйĕн докладĕнче вăл следовательсен йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисене тĕпчес енĕпе ăнăçлă ĕçленине палăртнă. Çын вĕлернипе çыхăннă преступленисене уçса парасси 96 процентпа танлашнă, çын сывлăхне вилмеллех йывăр сиен кӳнĕ, хĕрарăмсене мăшкăллани тĕслĕхсене 100 процент уçса панă.

Иртнĕ çулсенче пулнă преступленисем çине те алă сулман – чылай вăхăт иртнине пăхмасăр темиçе тĕслĕхе уçăмлатнă. Калăпăр, пирĕн республика çынни 2012 çултан тытăнса 2022 çулччен Волгоград облаçĕнче тата Чăваш Енре тунă преступленисем. Вăл пĕр хĕрарăма тата 5 хĕрачана мăшкăлланине, намăс ĕçсем тунине çирĕплетнĕ. Приговор та паллă ĕнтĕ. Суд ăна 17 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварнă.

Ĕçĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ çул-йĕрĕ – коррупципе кĕрешесси. Кăçал следстви управленийĕ сумлă влаç должноçĕсенчи темиçе çын тĕлĕшпе уголовлă ĕçсем пуçарнă. Халĕ, сăмахран, Павел Данилов вице-премьер патшалăх контракчĕсем тума, çав шутра нацпроектсем тĕлĕшпе саккассем илме пулăшнăшăн ипотека корпорацийĕн гендиректорĕ урлă 50 миллион тенкĕ взятка илнĕ тĕслĕхе тĕпчеççĕ. Следстви ĕçпуçа тишкернĕ май фигурантсен ытти «çылăхне» те тăрă шыв çине кăларнă.

# Два способа поступить в ЧувГУ в августе, если не поступил на бюджет в июле

**На вопросы интересующихся студентов и их родителей отвечает ректор Андрей Юрьевич Александров.**

Корр. – **Андрей Юрьевич, 3 августа завершается прием оригиналов аттестатов у поступающих на бюджет. Что же делать тем, кто не прошел по конкурсу или не успел перекинуть документы на бюджетное отделение другого факультета или вообще понял, что ошибся с выбором вуза?**

А.Ю. Александров – Мой ответ один - поступать. Это возможно даже в августе. Мы в Чувашском государственном университете предлагаем несколько возможностей для этого.

Первая - поступить на очное, очно-заочное, раньше оно называлось вечерним, или заочное отделение. Обучение здесь платное, но есть одно выгодное преимущество. Если сравнить стоимость обучения на очном и заочном отделении, то «заочка» окажется в разы дешевле – от 30 тыс. рублей в год. При этом и преподаватели, и учебные материалы, и лаборатории университета будут те же самые, что и у «очников», качество обучения не теряется. При соблюдении некоторых условий вуз может предоставить скидку на оплату обучения до 20 %. Завершение приема документов на платное обучение – 20 августа 2024 года.

Корр. – **На все факультеты можно поступить на очно-заочное и заочное обучение?**

А.Ю. Александров – Многие факультеты университета принимают абитуриентов на эти формы обучения, уточнить можно на сайте https://abiturient.chuvsu.ru в разделе Уровни – бакалавриат – платное обучение. Поступить могут:

- ребята, недавно окончившие школу,
- выпускники колледжей и техникумов,
- взрослые люди с высшим образованием, которые хотят получить второе/третье высшее образование.

Корр. - **Срок обучения на очно-заочном и заочном отличается от очного обучения?**

А.Ю. Александров - Выпускники школ будут учиться 5 лет на бакалавров и 6 на специалистов, абитуриенты с профессиональным образованием (СПО) могут учиться по ускоренной программе - 2 года 10 месяцев, а для второго высшего образования есть вариант и ускоренного образования, и индивидуального учебного плана. А еще формат дистанционного и смешанного обучения. Например, получить заочно второе высшее на юридическом факультете можно дистанционно, вообще не приезжая в университет.



Корр. – **Я давно закончил школу, для поступления в вуз мне нужно будет сдавать ЕГЭ?**

А.Ю. Александров - Вступительные испытания для каждой категории абитуриентов разные. Выпускники школ предоставляют результаты ЕГЭ, при этом минимальный порог по баллам должен быть пройден. Абитуриентам с профессиональным образованием (СПО) и высшим образованием достаточно пройти собеседование в форме тестирования по тем дисциплинам, которые предусмотрены при поступлении на выбранную специальность.

Корр. – **Слышал, что стать студентом ЧувГУ теперь можно и после 9 класса, так ли это?**

А.Ю. Александров – Совершенно верно. Мы принимаем на программы среднего профессионального образования, или СПО, выпускников и 9 и 11 классов. При поступлении не требуются результаты ОГЭ и ЕГЭ, нет вступительных экзаменов. Достаточно предоставить аттестат, зачисление осуществляется по среднему баллу документа об образовании. И это вторая возможность получить образование. При этом не нужно терять целый учебный год, дожидаясь следующей приемной кампании. Программы среднего профессионального образования (или СПО) открыты с 2022 года. В этом году ЧувГУ принимает студентов по программам СПО на трех факультетах:

- экономическом: «Экономика и бухгалтерский учет» и «Финансы»,
- юридическом: «Юриспруденция»,
- химико-фармацевтическом: «Фармация».

Обучение очное и заочное, платное – от 25 тыс. рублей. Документы на программы СПО принимаются до 15 августа. Однако, при наличии свободных мест прием документов можно продлить до 26 сентября. А после СПО будет легче получить высшее образование в ЧувГУ – преподаватели и часть учебной программы будет уже знакома, а получить высшее можно будет в более короткий срок.

Корр. – **Андрей Юрьевич, благодарю за то, что Вы поделились с нами такой полезной информацией.**

А.Ю. Александров – Хочу пожелать всем найти специальность по душе, а мы дадим вам хорошие знания и востребованные навыки. До встречи в Чувашском государственном университете!

АВГУСТĂН 4-МĔШĔ – ЧУКУН ÇУЛ ĔÇЧЕНĔН КУНĔ

# Пурнăçа пур енлĕ тĕревлет

**Вырсарникун – чукун çул çинче ĕçлекенсен кунĕ. Çак сферăра вăй хуракансем тата ăна кулленхи ĕçĕпе парăннисем хăйсен професси уявне пысăк хавхаланупа тата сатурлăхпа кĕтсе илеççĕ.**

Чукун çулсем çĕршывра пур еннелле те тăсăлаççĕ тата малалла та çул хываççĕ. Вĕсем чĕрĕ организм пек, ӳт-пӳри юн артерийĕсем пек. Ун тăрăх çулла та, хĕлле те – çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те, кирек хăш кунĕнче те пуйăссем чупаççĕ, çитес çĕре çитме васкаççĕ. Чукун çул тăрăх тĕрлĕ йышши тата тĕрлĕ капашлă грузсем те, пассажирсем те кусаççĕ. Вăрçă çулĕсенче ун тăрăх мĕн чухлĕ танк, тупăсем, ытти хĕç-пăшал ăсатман-ши фронта. Салтаксем те эшелонĕ-эшелонĕпе кайнă. Санитари пуйăсĕсем йĕркеленнĕ. Вăрçă пынă çĕртен эвакуаципе предприятисемпе заводсене, çынсене илсе тухнă. Пире çывăх Канашри чукун çул станцийĕ урлă акă паянхи кун та мĕн чухлĕ йывăç материал, станоксем, машинăсемпе ытти техника, çунтармалли-сĕрмелли материалсем, тĕрлĕ чĕртавар, ытти хатĕр-хĕтĕр куçмасть пулĕ унталла та кунталла! Тата, паллах, тĕрлĕ еннелле, тĕрлĕ сăлтавпа каякан пассажирсем. Чукун çул паян çĕршыв экономикипе хăватне тĕреклетет, çынсен пурнăç условийĕсене çăмăллатать, туслăх кĕперне хывать. Пуйăссем паян чукун çул тăрăх чикĕ тулашĕнчи çĕршывсенех çитеççĕ, вĕсене тĕрлĕ тавар çитерсе параççĕ тата пĕр-пĕрин хушшинчи килĕшӳсемпе пăхнă продукцие турттарса тухма, предприятисемпе компанисене пĕр-пĕринпе икĕ еншĕн те усăллă хутшăнса ĕçлеме майсем туса параççĕ, çынсен хутшăнăвне те йĕркелеме пулăшаççĕ. Эпир кăçал Байкалпа Амур магистралĕ хывма пуçланăранпа çур ĕмĕр çитнине паллă турăмăр. Пин-пин хĕрпе каччă ĕç вырăнĕ тупнă унта, хуласемпе ялсем çĕкленнĕ, инфраструктура йĕркеленнĕ. Совет саманинче тытăннă стройкăна пĕр хушă чарăннă хыççăн халĕ малалла тăсаççĕ. Çĕршывăн кăнтăрти çĕнĕ регионĕсенче те чукун çул вăй илсе пырать. Хăвăрт çӳрекен пуйăссем валли те чукун çулсем хываççĕ çĕршывра.

Тĕрĕс каларĕ Нӳшкасси ялĕнче пурăнакан, хăй вăхăтĕнче вăтăр çула яхăн Канашри чукун çул çинче вăй хунă Михаил Иванович Фомин: «Эпĕ чукун çул çинче ĕçлесе çĕршыва та, çынсене те усă кӳнипе паян кун та савăнатăп»,–терĕ.

Пирĕн Тăвай округĕн территорийĕпе чукун çул иртмест. Анчах пирĕн ялсенчен чукун çул çинче тăрăшакансем унччен те пулнă, халĕ те çук мар. Вĕсене пурне те професси уявĕпе саламлатпăр, пурнăçра ырлăх-сывлăхпа телей сунатпăр.

**Иван ГЛАДКОВ**



Ял активистне Антон Антонова чысланă самант

# Ял уявĕнче савăнчĕç

**Иртнĕ канмаллире Владимирски кунĕнче Тушкил тăрăхĕнче пурăнакансем, хăнасем ял уявĕнче савăнчĕç. Ял территори уйрăмĕн начальникĕ Александр Трофимов, округ администрацийĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов пухăннисене саламларĕç, уяври савăнăç малашне те çитĕнӳсем тума хавхалантартăр, терĕç.**

Уяв сцени пурне те хăй патне туртрĕ. Ăна тума кăçал пуçару бюджечĕн программипе пĕтĕм ял-йыш хутшăнчĕ. Вĕсене ăшă тав сăмахĕсем каланипе пĕрлех, уйрăм хастарсене Хисеп хучĕсемпе чысларĕç.

Ял аталанăвне пысăк тӳпе хывакансене, кулленхи ĕçре маттуррисене, сумлă юбилярсене, пултаруллă спортсменсене сцена çине чĕнсе Тав тунисемпе наградăларĕç. Тăрăллă та хăтлă уяв сцени самантлăха та пушă тăмарĕ çав кун.

Юрă-ташă ăстисенчен ялти «Сурпан» фольклор ушкăнĕ, кӳршĕллĕ Вăрмарсен «Çăлкуç» ансамблĕ хавхалану кӳчĕç. Шупашкар артисчĕсенчен – Тушкил хĕрĕ Вика Захарова, ял кĕрӳшĕ Николай Ключников, Сергей Павлов, Алексей Ермолаев юрă хыççăн юрă шăрантарчĕç. Ача-пăчана сывăххи, савăнтараканни те нумай пулчĕ. Спортпа туслисем хăйсен ăсталăхне ăмăртусенче тĕрĕслерĕç, кунĕпех суту-илӳ ĕçлерĕ. Çамрăксем валли ташă каçĕ ирчченех пулчĕ. Ял уявĕ пурне те кăмăла кайрĕ.

**Валентина ПАВЛОВА,**
**врач амбулаторийĕн медсестри**

# МАНĂН ÇЕМЬЕ – МАНĂН ПУЯНЛĂХ

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçланать

# Мухтавлă та пархатарлă пурнăç çулĕ

**«Пурнăçра чи хакли – çемье, ачасем, мăнуксем, самана лăпкă пулни»,–теççĕ Улянкăри Иван Ивановичпа Валентина Ивановна Ивановсем. Вĕсем ялта хисеплĕ, сумлă, ĕçчен те типтерлĕ, çемье йăли-йĕркисене упраса пурăннипе, ачисене тивĕçлĕ воспитани парса ӳстернипе палăрса тăраççĕ.**



## Çемье уявĕсенчен пуян уйăх

Иртнĕ уйăхра вĕсемпе тĕл пулма сăлтавĕсем те пулчĕç. Утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче туслă мăшăр пĕрлешнĕренпе 60 çул çитнине паллă турĕ. Вунă çул каялла ЗАГС пайĕнче ылтăн туй юбилярĕсене «Юратупа шанчăклăхшăн» общество медалĕпе чыслани, киле пырса илемлĕ юрăсем шăрантарса саламлани те асрах-ха. 25 çул каялла çак кун Ивановсен кĕçĕн ывăлĕ Тимофей ялти хӳхĕм хĕре Аленăна мăшăрĕ пулма ыйтнă.

Кевер туйпа кукашшĕпе кукамăшне Руслан мăнукĕн çемйи кĕçĕн мăнукпа хĕпĕртев кӳнĕ. Июлĕн 25-мĕшĕнче çывăх çыннисемпе тус-тăванĕ Валентина Ивановнана 85 çул тултарнипе саламланă. Сăмах май, унăн мăшăрĕн сентябрĕн 21-мĕшĕнче 86 çулхи çуралнă кунĕ пулать.

## Темле йывăр пулсан та вĕренме тăрăшнă

Сакăр теçетке ытла хыçа хăварнă ĕç ветеранĕсем çине пăхатăн та, сăпай та лăпкă калаçăвне киленсе итлесе вĕсенче юрату туйăмĕ сĕвĕрелмен пек туйăнать.

«Паллах, паян та çамрăк чухнехи пекех пĕр-пĕриншĕн тунсăхлатпăр, хамăр ватăлса пыратпăр пулсан та чунпа çамрăк»,–ăшшăн йăл кулса хуравларĕ Валентина Ивановна.

Иккĕшĕ те Улянкă ялĕнче çуралнă вĕсем. Пĕр урамра ӳснĕ. Тусан тустарса чупса вылянине, шкула çӳренине куç умне кăларчĕç. Ун чухне каччăпа хĕр туйăмĕ çуралайманха вĕсенче. Иккĕшĕ те вăрçă ачисем. Иван Иванович нумай ачаллă йышлă çемьере ӳснĕ. Ашшĕ фронтран суранланса таврăнсан ир çĕре кĕнĕ. Ачалăхĕ питĕ нушаллă килнине мăнукĕсем те ăша хывса, çăкăр хакне пĕлсе ӳсеççĕ. Выçăллă-тутăллă пурнăç ăна та, кӳршĕ хĕрне Вальăна та ачаллах ĕç çумне çыпăçтарнă. Пĕр шăпаллă скерсене туслаштарнă, пиçĕхтернĕ. Анчах çитмен пурнăç вĕсен вĕренес ĕмĕт-туйăмне татайман. Çирĕплетнĕ кăна. Иванпа Валентина шкулта лайăх ĕлкĕрсе пынă, уйрăмах математикăпа вăйлă пулнă.

Маттур каччă Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕ хыççăн направленипе Архангельск облаçĕнче вăрман хуçалăхĕнче десятникре ĕçленĕ. Ядерлă полигонта службăра тăнă. Салтак гимнастеркине хывсанах Канашри леспромхоза вырнаçса 5 çул строительматериалсем хатĕрлессипе тăрăшнă. Шăпа тени ăна Тăвайри «Сельхозтехника» пĕрлешĕвне илсе çитернĕ. Инженер-технологра вăй хурса канăва тухнă.

«33 çул СХТ мастерскойĕнчен тухман темелле,– аса илчĕ çав вăхăта Иван Иванович.– Техника нумайччĕ. Пĕр енче – комбайнсемччĕ, тепĕр енче – тракторсем. Хăшне мĕнле юсав кирлине, камсем ĕçленине лайăх пĕлсе тăнă. Петр Гуринпа çамрăксене вырăнтах специальноç парассипе те чун-чĕререн тăрăшнă».

Ахальтен-и паян кунччен хăйсен наставникне ырăпа аса илеççĕ. Халĕ те канашлаççĕ унпа. Хăй вара çăмăл машинăпа çӳреме юратсах кайман. Пĕрремĕш кăларăмри, 62 çул каялла туяннă «Иж-Юпитер» мотоцикл питех те хаклă уншăн. Унпа кĕрлеттернĕ-çке Улянкăран Тăвайне ĕçе. Нихăçан та кая юлман. Ывăлĕсем, унтан аслă мăнукĕсем çӳренĕ унпа, кĕçĕнреххисем те лайăх пăхса тăраççĕ.

Иван Иванович ялта кашни урамрах вăййа тухнине, çимĕкре вара пурте пĕрле аслă вăйă картине тăнине каласа пачĕ. Вăййа тухнă каçсенче ачалăхри туслăхран хĕрӳ юрату туйăмĕ хĕмленнĕ те ĕнтĕ яштака та тĕреклĕ каччăра. Çемье çавăрма вăхăт çитнине ăнланса ачаран çывăх кӳршĕ хĕрне Валентинăна киле илсе кĕнĕ. 1964 çулхи июлĕн 25-мĕшĕнче ял Советĕнче хут уйăрттарнă çамрăксем. Çапла икĕ хĕрпе икĕ ывăл пăхса ӳстернĕ. Пурте вĕсем хăйсен çулĕсене тупнă.

Валентина Ивановна 34 çула яхăн «Луч» хуçалăхра бухгалтерта ĕçленĕ. Ял çыннисем ăна темиçе хутчен район, ял Совечĕн депутачĕ пулма суйланă. Кун-çулне бухгалтер специальноçĕпе çыхăнтарасси вара çапларах пулнă. Вăтам шкул хыççăн тантăшĕсем Красноярска ĕçлеме кайма шут тытнă. Амăшĕ хирĕç пулнăран хĕрĕн шухăшне улăштарма тивнĕ. Колхозри ĕçсенче хастар Валентинăна ревкомиси членне суйланă. Ăс-тăнĕпе çивĕчскере кассир ĕçне шаннă кĕçех.

«Хăра-хăрах лартăм укça-тенкĕпе çыхăннă ĕçе. Пĕлĕве ӳстерме Горький хулине вĕренме ячĕç. Заочно вĕренме йывăрччĕ. Библиотекăран кĕнекесем илсе вулаттăм. Михаил Андреевич тĕп бухгалтер яланах пулăшса пыратчĕ. Пĕр хушă тĕп бухгалтерта та ĕçлеме тиврĕ»,–терĕ Валентина Ивановна.

Вăрçăра хыпарсăр çухалнă ашшĕн фронтран янă çырăвĕсем темрен те хаклă пулнă çавăн чухне хĕршĕн. Амăшĕ ячĕпе килнĕ 3 çырăва упраса хăварайманшăн е вăрçа тухса кайнă çул хăй иккĕре пулнине, шăллĕ сăпкара выртнине, арçын хӳтлĕхĕсĕр ӳснине аса илнипе-ши куçĕсем шывланчĕç Валя аппан.

«Ачасене лайăх пăхса ӳстер, вĕрентме тăрăш»,–тесе çырнă сăмахсем вара асран тухмаççĕ. Мăнукĕсене те виçĕ кĕтеслĕ çырусем çинчен темиçе хутчен каласа кăтартнă. Аслисен ырă канашĕсене тăнласа пурте вĕсем лайăх вĕренсе, ĕçри çитĕнĕвĕсемпе савăнтараççĕ ватăсене. Иван Ивановичпа Валентина Ивановнан мухтавлă та пархатарлă пурнăç çулĕ 10 мăнукĕшĕн, 4 кĕçĕн мăнукĕшĕн тата нумай-нумай çамрăкшăн ырă тĕслĕх выранĕнче.




## Улми йывăççинчен аякка ӳкмест

Ивановсен ачисем те ĕçчен, çын çинче хисеплĕ. Асли, Ираида, Улянкăрах тĕпленнĕ. Икĕ ывăлпа хĕрĕ пурнăç çулĕ çине тухнă. Мăшăрĕ вăхăтсăр çĕре кĕрсен те хуçалăхне çирĕп тытрĕ хĕрарăм. Ĕне выльăх усрама вăй-хăват çитерчĕ. «Ачасем питĕ пулăшаççĕ»,–терĕ вăл. Сĕт юр-варĕ вара çынсене тивĕçтерме те юлать. Кунçулне çыхăну ĕçĕпе çыхăнтарса 38 çултан 28-не телеграфисткăра, ыттине почтальонкăра тăрăшнă Ираида Ивановна. Нумаях пулмасть Руслан ывăлĕн çемйи иккĕмĕш хут асанне туса савăнтарчĕ. Юрийăн çемйинче пĕр ача çитĕнет. Тăвайри халăх театрĕнче вылямa та, ялти «Мерчен» ансамбльте юрлама та вăхăт тупать.

Ивановсен тепĕр хĕрĕ Полина Турă çырнине юнашарти Тенеялĕнче тупнă. Канашри медучилищĕре вĕренсе тухнăранпа 40 çула яхăн Тăвай больницинчи терапи уйрăмĕнче вăй хурать. Мăшăрĕ харпăр хăй ĕçне уçса утар тытать. Икĕ ывăлĕ те спортпа туслă. Володя аслă шкул пĕтерсе ĕç çулĕ çине тăнă. Петр – университет студенчĕ.

Андрей ывăлĕ те Ираида аппăшĕ пекех çыхăну ĕçне суйланă. Мăшăрĕпе Гальăпа техникумра паллашса çемьеленнĕ. Икĕ хĕрĕнчен пĕри – эколог, тепри Чăваш патшалăх университетĕнче врача вĕренет. Кĕçĕн мăнукпа савăнтарма ĕлкĕрнĕ юратнă аслашшĕпе асламăшне. Килсе çӳреймен вăхăтра карас телефонĕпе шăнкăравлаççĕ вĕсем патне. «Кнопкăна пусса калаçма хăнăхса çитрĕм»,–пĕлтерчĕ телефон шăнкăравĕ хыççăн Валентина Ивановна.

Иван Ивановичпа Валентина Ивановна кĕçĕн ывăлĕн Тимофейăн çемйипе пурăнаççĕ. Кил пусĕ Канашри кăнтăр электричество сечĕн Тăвайри уйрăмĕн ертӳçи. Мăшăрĕ Алена округ администрацийĕн вĕрнӳ пайĕнче ĕçлет. Пĕр çăвартан шăкăл-шăкăл пурăнаççĕ. «Пире питĕ упраççĕ. Алена кин куллен апат хатĕрлесе хăварать. Хамăрăн хĕр пекех юрататпăр. Сатур, вашават, кукăль-макăлне те тăтăш пĕçерет, мăнуксем мунчаран çуса кăлараççĕ»,–кăмăллăн пĕлтерчĕç ватăсем.

– Пирĕн асанне пĕçерекен çăкăр чи тутли,–калаçăва хутшăнчĕ Маша мăнукĕ.

Валентина Ивановна çак таранччченех килте хăй хура çăкăр пĕçерет иккен.

– 4–5 сехет чуста тĕпĕпе йӳçĕтсе лартнă хыççăн тин çăратăп,–терĕ вăл. Асламăшне кура Маша та ачаран чустапа аппаланма юратать. Валентина Ивановнан 85 çулхи юбилейне епле тутлă «медовăй» торт янтăланă. Вăл кăçал Тăвай шкулне ылтăн медальпе пĕтернĕ. Виçĕ хутчен Республика пуслăхĕн стипендиачĕ пулнă. Хими, биологи предмечĕсемпе олимпиадăсенче çĕнтернĕ. Халĕ аслă шкула вĕренме кĕме хатĕрленет. Даниил мăнукĕ студент, Кирилл Тăвай шкулĕнче вĕренет. Иккĕшĕ те спортпа туслă. Чăнах та, мăнукĕсем тивĕçнĕ наградăсене курăнмалла çĕре вырнаçтарнă. Ĕç ветеранĕсенчен Хисеп хучĕсем пирки ыйтсан, Валентина Ивановна шӳтлĕ майлăрах хуравларĕ: «Пĕр пĕчĕк михĕ пулать пулĕ». Мăшăрĕн сăнĕ Хисеп хăми çинчен кайман. Республика шайĕнче те палăртнисем сахал мар. Вĕсем кулленхи ĕçре кăна мар, район общество пурнăçĕнче те активлăхĕпе палăрнă. Валентина Ивановна депутат пулнă вăхăтра ял çыннисен пурнăçне лайăхлатас тĕрлĕ ыйтупа вырăнти влаç органĕ умне тухнă. Çынсем те туртăннă ун патне.

Мĕн тăсать-ха вăрçă ачисен ĕмĕрне? «Çителĕклĕ хускалмалла. Утни – сывлăхшăн усăллă»,–сăмах хушрĕ Иван Иванович. Куллен тенĕ пекех çывăрас умĕн урамри ватăсемпе пĕрле ял вĕçне çити утса кайса килеççĕ. Юлашки çулсенче аслă ăру çыннисем скандинави мелĕпе утма пуçланине, хăйсене лайăххах туйнине палăртрĕç.

Юлашкинчен çемье çирĕплĕхĕ патне таврăнтăмăр.

– Килĕштерсе пурăнма, ĕçе уйăрмасăр, пĕр-пĕринпе канашласа тума тăрăшнă. Паллах, 60 çул хушшинче шăкăр-шакăрсăр пулман ĕнтĕ. Тавлашăва нихăçан та харкашасси патне çитермен. Каçарма пĕлнĕ. Ачасем пире курса ӳсрĕç. Вĕсен ачалăхне телейлĕ тăвас, тенĕ. Çемьеленсен мăшăрĕсене хисеплеме, пулăшма, хаклама пĕлччĕр тесе вĕрентсе ӳстернĕ. Пирĕн шутпа, пĕр-пĕрне ăнланакан мăшăрсен çемйи çирĕп,–терĕ Валентина Ивановна.

Раиса ШУМОВА

# Пĕрле пуласчĕ, пĕр-пĕрне пулăшасчĕ

**Тинĕс-çар флочĕн кунне Тăрмăш территори уйрăмĕнче те анлăн паллă турĕç. Ку уяв пирĕн Тăван çĕршыв интересĕсене тинĕсре виçĕ ĕмĕр ытла шанчăклă хӳтĕлекен Раççей флочĕн вăйне кăтартать.**

Ялти Мухтав монуменчĕ умне ветерансем, тинтерех службăран килнĕ моряксемпе пĕрле вĕсен мăшăрĕсем, ачисемпе мăнукĕсем, ял çыннисем пухăнчĕç. Йăлана кĕнĕ йĕркепе Раççей флочĕн ялавне çĕклерĕç. «Андреевски ялав пирĕн Тинĕс-çар флочĕн мăнаçлăхне, хăватне палăртса яланах çӳлтен-çӳле вĕлкĕштĕр!»–терĕç ветерансем.



«Эсир Тăван çĕршыва хӳтĕлесе çĕршыва хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессишĕн хĕсметре тăни вăл – чи пысăк хисеп. Карappa шыв ай киммисенче, тинĕс авиацийĕнче, пехотăра службӑра тăнă тата тăракансене те саламлатăп, чĕререн тав тăватăп»,–терĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Алексей Матросов.

«Тăрмăшри çар пĕрлĕхĕ» общество организацийĕн членĕ Вячеслав Сидоров Раççей флочĕн историйĕпе кĕскен паллаштарчĕ. Ялти ветерансен совечĕн ертӳçи Елена Матросова та саламларĕ ветеран моряксене, çирĕп сывлăх, пуçăнакан мĕнпур ĕçре ăнăçу сунчĕ. Елена Николаевна хăй те моряк арăмĕ, Николай Михайлович Балтика флотĕнче 3 çул хĕсметре, çав хушăра Ангола Республикинче 9 уйăх çар службинче пулнă. Петр Сильвестрович Звонарев ветеран мăнукĕсемпе килнĕ уява. Тепĕр тĕлĕнмелле самант та пулчĕ, Тутар тăрăхĕнчи Хучсан ялĕнчен те килчĕç моряксем уява. Вĕсем тăваттăмĕш çул ĕнтĕ Тинĕс-çар флотĕнче пулнă ветерансене асăнса лартнă стела умне чечексем хураççĕ, ку хутĕнче боцман статуэткине парнелесе хăварчĕç. Кĕвĕ хыççăн кĕвĕ янăрарĕ уяв ячĕпе, пурте пĕрле юрларĕç. Ял старости Аркадий Антонов вĕсене пуçлаканĕ пулчĕ.

Çакăн пек уявсем пулни пĕр-пĕринпе çывăхрах паллашма, ачасене патриотла воспитани пама пулăшаççĕ. Пĕрле пуласчĕ, кирлĕ чухне пĕр-пĕрне пулăшасчĕ.

**Елена МАТРОСОВА,**
**Тăрмăш ялĕ**

## ПĔЛНИ ПĂСМАСТЬ

• Кăлпассине, тĕтĕмленĕ çимĕçсене мĕнрен тунине эсир нихăçан та пĕлес çук. Аш-какая тĕтĕмлени, тăварлани ăна вăрах упрама май парать. Паллах, вĕсенчен усси сахал.

• Маргаринпа, тип çупа ăшалани çимĕçĕн пĕтĕм усăлăхне пĕтерет. Çитменнине, канцерогенсем пулаççĕ.

• Пылак çимĕçсен йышĕнче чи сиенлисене палăртар: леденец, мармелад, чăмламалли канфет. Чăннипе, вĕсем пĕр татăк тортран та сиенлĕрех, мĕншĕн тесен тĕс кĕртекен, тутлă шăршăллă тăвакан хими хатĕрĕсем пур. Пылак çимĕççĕр чăтаймастăр-и? Пыл, типĕтнĕ улма-çырла, йӳçĕ шăккăлат пулăшĕç.

• Тин пĕçернĕ булка, шурă çăкăр тутлă, паллах, анчах вĕсем организмшăн (начарланакан çыншăн – пушшех те) усăллă мар, мĕншĕн тесен çăнăха клетчаткăран тасатаççĕ. Лавккара тырра вĕтетмесĕр пĕçернĕ çăкăр туянма сĕнеççĕ.

## Пахча çимĕçрен – запенка



**6 çĕр улми, 2 сухан, 100 грамм кăмпа, 2 помидор, 300 грамм сыр илмелле. Соус валли 2 апат кашăкĕ хăйма, 2 апат кашăкĕ майонез, ыхран 1 шăлĕ кирлĕ.**

Çĕр улмине, сухана, помидора çавракан касмалла, кăмпана вакламалла. Пахча çимĕçе çу янă çатмана сийпе хумалла, юлашкинчен помидор.

Çиелтен теркăпа хырнă сыр сапмалла та 180 градус таран хĕртнĕ духовкăра 40 минут пĕçермелле.

---

**29 ИЮЛЯ – 4 АВГУСТА – НЕДЕЛЯ ГРУДНОГО ВСКАРМЛИВАНИЯ**

# Важность грудного вскармливания



### Преимущества для мам

Физический контакт между мамой и малышом в первое время после родов помогает продлить период лактации и может помочь желудочно-кишечному тракту мамы приспособиться к повышенным затратам энергии во время лактации.

Грудное вскармливание делает маму более внимательной к потребностям малыша, ускоряет сокращение матки после родов и снижает риск кровотечения. Помогает маме восстановить вес, который был до беременности, и снижает риск рака яичников и груди, сердечно-сосудистых заболеваний, диабета второго типа, остеопороза в пожилом возрасте.

### Преимущества для ребенка

- Грудное молоко обеспечивает и оптимальное питание (жиры, лактоза, белки и основные питательные вещества) для развития и роста ребенка, и полную защиту от инфекций.

- Доношенные дети, получающие грудное молоко, быстрее набирают вес, у них более зрелый желудочно-кишечный тракт и лучше развита нервная система; кроме того, они меньше подвержены инфекциям и хроническим заболеваниям по сравнению с детьми на искусственном вскармливании.

- У недоношенных детей снижается риск некротизирующего энтероколита (НЭК), негативной реакции на энтеральное кормление, хронических заболеваний легких, ретинопатии недоношенных, задержек нервно-психического развития и повторной госпитализации.

- Грудное вскармливание улучшает неврологическое развитие и характеристики поведения, а также снижает риск ожирения и диабета второго типа во взрослом возрасте.

- Стимулирует нормальное развитие ротовой полости малыша.

- Кормление грудью также обеспечивает тесную связь между мамой и малышом.

Состав и биологические функции грудного молока

Состав женского молока изменяется в процессе лактации, особенно на протяжении первых дней и месяцев кормления грудью. В первые 5 дней после родов у женщины вырабатывается молозиво. С 15-го дня лактации вырабатывается зрелое женское молоко.

Доказано, что грудное молоко — лучшее питание для ребенка первого года жизни.

Это обусловливают многие факторы:

• наличие в грудном молоке многих ферментов (амилаза, липаза, глюкоза-6-фосфатдегидрогеназа, фосфатазы, протеазы и др.) и транспортных белков, обеспечивающих легкость его усвоения;

• наличие в грудном молоке гормонов и факторов роста (лептин, грелин, эпидермальный и инсулиноподобный факторы роста и др;

• наличие в грудном молоке многочисленных защитных компонентов;

• наличие в грудном молоке олигосахаридов, низкие уровни белка и фосфора, способствующие росту нормальной кишечной микрофлоры;

• содержание в грудном молоке в значительном количестве нескольких штаммов бифидобактерий, что является ключевым фактором становления и созревания местного иммунитета пищеварительного тракта;

• взаимное позитивное эмоциональное воздействие, которое испытывают мать и ребенок при кормлении грудью;

• наличие в грудном молоке длинноцепочечных полиненасыщенных жирных кислот, необходимых для формирования клеток головного мозга и сетчатки глаза у грудных детей и др.

Первое прикладывание ребенка к груди

С целью становления полноценной лактации здорового новорожденного ребенка необходимо прикладывать к груди матери в первые 30 минут после неосложненных родов. Продолжительность первого контакта матери и ребенка — не менее получаса. Раннее прикладывание ребенка к груди матери обеспечивает быстрое включение механизмов секреции молока и более устойчивую последующую лактацию;

• способствует продукции окситоцина, что стимулирует сокращение матки после родов и уменьшает опасность кровопотери у матери;

• оказывает успокаивающее действие на женщину;

• усиливает чувство материнства;

• обеспечивает лучшую адаптацию новорожденного к внеутробной жизни;

• обусловливает заселение пищеварительного тракта младенца нормальной микрофлорой.

Необходимо помнить, что для поддержания лактации особенно важны ночные кормления. Это определяется тем, что ночью уровень гормона пролактина, регулирующего секрецию грудного молока, более высокий, чем днем. Новорожденный может «требовать» от 8-10 до 12 и более прикладываний к груди за сутки. Эти «требования» необходимо терпеливо удовлетворять. Длительность кормления на этапе становления лактации обычно составляет 20 минут и более. К концу первого месяца жизни частота кормлений обычно уменьшается до 7-8 раз, а продолжительность каждого кормления сокращается до 10-15-20 минут.

В соответствии с современными принципами организации питания детей первого года жизни при достаточной лактации и гармоничном развитии ребенка до 6 месяцев жизни рекомендуется исключительно грудное вскармливание. В остальных случаях следует сохранить исключительно грудное вскармливание как минимум до 4 месяцев жизни ребенка. Кормление грудью целесообразно продолжать до достижения ребенком возраста 1-1,5 года, но частоту прикладывания ребенка к груди после одного года жизни рекомендуется сократить до 1-3 раза в сутки.

**Ольга ДИМИТРИЕВА,**
**врач-гинеколог**

## ПĔЛМЕ

## Электрон пирус та сиенлĕ



**Хăшĕ-пĕрин шухăшĕпе, электрон пирус организма вăйлах сиен кӳмест. Анчах ку тĕрĕс мар!**

Лондонри Мария королева университечĕн ăсчахĕсем шăшисемпе тата çынсемпе сăнав иртternĕ. Кайран çакна палăртнă: вейперсем (электрон пирус туртакансем) пневмонипе ытларах чирлеççĕ. Сăлтавĕ те паллă. Электрон пирус ӳпкене шыçăнтаракан бактерисене клеткăсем патне çыпăçма пулăшать. Пневмоккок бактерийĕсем сывлав органĕсем çинче чир пуçарасăр нумай вăхăт пурăнма пултараççĕ. Электрон пирус вара вĕсене клеткăна çăмăллăнах кĕме пулăшать, çапла пневмони пуçланать.

## Ăшшăн саламлатпăр



Тăвай ялĕнче пурăнакан хамăрăн хаклăран та хаклă çыннăмăра – савнă мăшăра, чун юратнă аннене, ăшă чунлă кукамая **Полина Николаевна Ивановна** çывхаракан августăн 5-мĕшĕнчи 70 çулхи юбилейĕпе çепĕç кăмăл-туйăмсенчен ăшшăн саламлатпăр. Пурнăçра пĕтĕмпех ырă, хитре, таса пултăр санăн. Утнă чух уруна, ĕçленĕ чух аллуна çăмăл килтĕр. Сывлăхран пахарах пуянлăх çук, çавăнпа сана çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Телей хутаçĕ пĕрлех çӳретĕр. Чунра лăпкăлăх, чĕрере савăнăç хуçалантăр.

Пирĕн анне çын çинче хисеплĕ. Мĕн канăва тухичченех ялта киномеханикре ĕçленĕ. Тăрăшулăхне тивĕçлипе хакласа «Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ кинематографисчĕ» хисеплĕ ят панă. Пире, икĕ хĕрне, аттепе Станислав Николаевичпа иккĕшĕ тивĕçлĕ воспитани парса ӳстернĕ, çемьелентернĕ, паян 5 мăнукĕпе савăнаççĕ.

Санри ыр кăмăллăх, ăш пиллĕх пирĕншĕн паха тĕслĕх пулса тăрать. Яланах хальхи пекех илемлĕ, ĕçчен, тарават, мал ĕмĕтлĕ пул. Çывăх çынсен юратăвĕпе тимлĕхĕ, тус-юлташусен, тăвансен хисепĕ куллен телей, хавхалану кӳччĕр.

Тавах сана, ыр çыннăмăр, эс пурришĕн,  
Кил чысĕпе çемье ăшши пулнишĕн.  
Татах та нумай çул эс пурăнсам,  
Пире пит лайăх эс çумра пулсан.

**Ăшă салампа – мăшăрĕ,**  
**хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 5 мăнукĕ** 0972

Хисеплĕ ĕçтешĕмĕре, Тăвайри вăтам шкулта поварта тăрăшакан **Людмила Николаевна Семенована** 55 çулхи юбилейĕпе ăшшăн саламлатпăр. Хурçă пек çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, ăшă кăмăл-туйăм, вăрăм кун-çул сунатпăр. Пурнăçри кашни утăму ырлăхпа, çĕнĕ ĕмĕт-тĕллевсемпе тултăр, çывăх çынсен юратăвĕпе тимлĕхĕ, ĕçтешӳсен хисепĕ телейпе савăнăç кӳччĕр.

Килсе тăччăр çуралнă кунсем,  
Саламлаччăр сире ыр çынсем.  
Чи пахи – ăш пиллĕ сăмах,  
Чи кирли – çирĕп сывлăх, паллах.

**«Тăвайри кооператив» потребобщество**

СЫВЛĂХ

## Ӳт чирĕнчен – хура пилеш



**Дерматит, экзема, кăмпа чирĕ – ӳтпе çыхăннă амаксем – хура пилеш витĕмĕпе иртме пултараççĕ.**

Çырлана малтанах типĕтмелле, кофе авăртакан машинăпа вĕтетмелле. Çăнăх майлă типĕ çимĕçе пăсăлнă ӳт тĕлне сапмалла. Вĕтетнĕ çырлана тухтăр сĕннĕ маçпа та хутăштарма юрать.

*(Халăх медицинин меслечĕсемпе сипленме пуçличчен тухтăрпа канашлама ан манăр).*

# Хаваспах хутшăнаççĕ

**Тăвайри 1-мĕш номерлĕ ача садĕнчи шкула кайма хатĕрленекен ачасем пахча çимĕç ӳстерес ĕçри ăсталăха кăтартса пачĕç.**

Паллах, аслисем ертсе пынипе, вĕсен пулăшăвĕпе ĕнтĕ. Кунта агролаборатори йĕркелени те шăпăрлансене пахчари ĕçсемпе ытларах интереслентерме май парать. Çуркунне лартса хăварнă кабачоксем пирвайхи çимĕçĕсемпе савăнтарма пуçларĕç. Çак ĕçе хăйсем хутшăнни вĕсене çут çанталăкпа çывăхрах паллашма, ӳсен-тăрансен тĕнчине ăнланма пулăшать.

Садикри ĕç ачасене тăван тавралăха юратма, хăйсен ĕçĕн çимĕçне хаклама пулăшни пĕлтерĕшлĕ. Пĕчĕк ĕçченсем çимĕçсене шăварма, çумкурăкран тасатма хаваспах хутшăнаççĕ. Çак культура мĕнле ӳснине куллен сăнаççĕ. Халĕ те, акă, кабачоксене пуçтарнă майăн куçĕсем савăнăçпа çуталчĕç.



Çапла вара пахчари ĕçсем экологипе çут çанталăк ăсталăхне ачасене вĕрентмелли пĕлтерĕшлĕ меслет пулса тăрать. Пĕчĕк пахчаçăсем çут çанталăка малашне те çакнашкалах тăрăшуллă упракансем пуласса шанатпăр.

**Валентина КОНСТАНТИНОВА, воспитатель**

ХАЛĂХРА САРĂЛНĂ СĔНӲ-КАНАШ

- Варени пĕçернĕ вăхăтра кăштах лимон сĕткенĕ хушсан вăл сахăрланса лармĕ;
- Варение скороваркăпа йăваш çулăм çинче 7-10 минут пĕçерсен тĕсĕпе витаминсем ытларах сыхланса юлĕç;
- варени, повидло, желе таврашĕнче кăвакăш ан пултăр тесен сивĕннĕ варени çине ирĕлтернĕ пыл карасĕ (воск) ямалла, вăл хытса çитсен банкăна полиэтилен хупăпа е пергамент хучĕпе витмелле;
- компотпа сĕткене банкăна туличчен ямалла, хупнă хыççăн унта май пур таран сахалрах сывлăш юлмалла;
- тĕшĕллĕ улма-çырла компочĕсене çулталăкран ытла упрама юрамасть, мĕншĕн тесен унта сывлăхшăн сиенлĕ синиль кислоти пухăнать.




**Памятные даты истории РОССИИ**

**6 августа** – День железнодорожных войск (28 лет)

ПĔЛТЕРӲСЕМ – ОБЪЯВЛЕНИЯ

0694 КУП. коз, овец, бычков. Т. 8-9278508564 25-4

0811 ПОКРАСКА крыш. Домов. Т 8-9534482716 4-3

0217 ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Т. 8-9876617161 35-12

0305 ПЕСОК.ЩЕБЕНЬ.ОПГС. Т. 8-9061333944 22-10

0961 ПЕСОК. ГРАВМАССА. ЩЕБЕНЬ. НАВОЗ. Доставка. Т. 8-9523106871 11-2

0927 Ремонт холодильников и стиральных машин. Т. 8-9279955504 3-3

0919 ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Качественно. Недорого. Т. 8-9656867950 6-3

1341 НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ. Т. 8-9278445544, 8-9530140140 10-10

0815 БУРЕНИЕ КОЛОДЦЕВ, ж/б колец. Доставка. Т. 8-9603061972 4-4

1963 Требуются разнорабочие в Москву. З/п от 90 тыс. р. Т. 8-9373882555 26-26

0975 СРУБЫ 3,5х3,5, 3х5, дрова и доски. Т. 8-9278544762

1924 КУПЛЮ бычков, коров, телок, вынужд. забой. Дорого. Т. 8-9370160057 27-26

0415 ОКНА ПВХ под ключ от производителя за кор. сроки. Замер. Гарантия. Скидки. Монтаж по ГОСТу Т. 8-9603031551 11-9

1826 ДРОВА (колотые, метровые). Доски: хвоя, береза, осина. Сруб. Т. 8-9373944344, 8-9278423391 33-29

9 августа (пятница)
с 13:00 до 16:00
состоится Выставка-продажа мёда из Башкирии
Акция:
3-х литровая банка цветочного мёда 1200 руб.
Дом культуры с. Янтиково.

ООО «Канашский завод технологической оснастки» приглашает на работу:
1. Мастер производственного участка з/п от 60 000 руб.
2. Инженер-технолог з/п от 60 000 руб.
3. Менеджер по снабжению з/п от 55 000 руб.
4. Контролер ОТК з/п от 50 000 руб.
5. Слесарь по ремонту оборудования з/п от 55 000 руб.
6. Плотник на упаковку продукции (можно без опыта работы) з/п от 45 000руб.
7. Электромонтер по ремонту и обслуживанию оборудования з/п от 45 000 руб.
8. Электромонтер для сборки блоков управления электродвигателя (можно без опыта работы) з/п от 40 000 руб.
9. Слесарь МСР на сборку техники з/п от 70 000 руб.
10. Штукатур-маляр з/п от 45 000 руб.
11. Подсобный рабочий з/п от 40 000 руб.
12. Электросварщик ручной сварки з/п от 70 000 руб.
13. Водитель автопогрузчика з/п от 55 000 руб.

Преимущества работы в ООО «КЗТО»:
- Высокий уровень заработной платы, дополнительное премирование при перевыполнении сменного задания;
- Полный соц. пакет, хорошие условия труда;
- Современное оборудование, высокая культура производства;
- Обучение и профессиональный рост;
- Трудоустройство согласно ТК РФ;
- Тренажерный зал;
- Корпоративный отдых
- Компенсация питания

Адрес: г. Канаш, ул. Свободы, д. 36, ост. Мегацентр
Тел.: +7 (83533) 4-15-11; +7 (937) 0111570
2-1

Мы есть в сообществе «ВКонтакте», также в телеграмм канале. Хотите узнать подробнее, проходите по QR-коду

Коллектив МБОУ «Можарская СОШ» выражает глубокое соболезнование сторожу школы Муханову Сергею Александровичу по поводу смерти матери –
**МУХАНОВОЙ**
**Раисы Ивановны**
0974

"Ял ĕçченĕ" ("Сельский труженик")
Тĕп редактор А.Е.ЕГОРОВА

Учредительсем – Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Ен цифра аталанăвĕпе информаци политикин министерствин «Тăвай районĕн «Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕ» ХТУ

Хаçата çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмне тĕрĕслесе тăракан федераллă службăн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри Управленийĕ 2012 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00239 №-пе регистрациленĕ.

Хаçат эрнере 1 хут (эрнекун) чăвашла (хăш-пĕр материалсем вырăсла) тухать.
Пичете панă 01.08.2024 ç. 19.00, графикпе 19.00 сех.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ тата каялла тавăрса памаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн редакци явап тытмасть. Реклама материалĕсен палли – Р

Номершĕн яваплă дежурнăй Р.В.ШУМОВА

Компьютерпа калăплакан: Н.В.АЛЕКСАНДРОВА

Хаçата районти "Ял ĕçченĕ" хаçат редакцийĕнче наборласа версткăланă, "Чăваш Ен" ИПК" АУ типографийĕнче пичетленĕ. Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт.
Çырăнтару индексĕ – ПР 238. Калăпăшĕ – 1 пичет листи. Тираж – 1415. Заказ

Редакципе издатель адресĕ: 429290, Чăваш Республики, Тăвай ялĕ, Ленин проспекчĕ, 11-мĕш çурт.

Телефонсем: тĕп редактор – 2-11-10, обществăпа политика, экономика пурнăçĕн тата çырусен пайĕсем – 2-14-05, яваплă секретарь тата наборпа верстка пайĕ – 2-13-10, бухгалтери – 2-15-64. Электронлă почта: smi11@cap.ru